*14-мĕш çул тухать.*

№ 13—14. Октябĕр. 1938 ç.

Чăваш коммунĕ" хаçат кăларать.

# Капкăн



Хăш-пĕр предприятисен администраторĕсем социализмла ăмăртăва йертсе пымаççĕ.

—Пахом Пахомович илтни—пирĕн савăт 1938 çула ăнăçулă вĕçлес тĕлĕшпе сирĕн савăтпа социализмла ăмăртăва тухнă иккен.

—Ну?! Ăçтан пĕлен?

—Хаçатăн пайанхи номĕрĕнче вуларăм

# ВИÇĔ КАЛАВ

## Асаилӳ

— Есĕр пурте çамрăк çынсем. Мана, старике, авалхине кăшт аса илме ирĕк памăр-ши?

Колхоз уйавне пухăннисем çак кукша старик çине тилмĕрсе пăхса илчĕç.

— Кĕскен калăп, ан хăрăр... Нимех те калайас çук та... Епĕ ак ватсупнă çын, çапах çĕнĕ обшчĕства кирлĕ çын епĕ. Ĕçлемесен те епĕ пултаратăп, анчах ĕççĕр пурнассăм килмест. Вăй пур çинче ĕçлемесĕр ма пурăнас-ха?

— Асатте, ватă çынна халĕ хисеплеççĕ!—кăшкăрса йачĕ хайхи старикĕн ачин ачи, Ваççă студент.

— Тĕрĕс, Ваççă, тĕрĕс! Анчах ман килте кивĕ йапаласем пур. Никама та кирлĕ мар вĕсем.

— Мĕнсем?—терĕç темиçе çын харăс.

— Вут çапса кăлармали çулу (чакма), ăвă, вутчулĕ те пур. Халĕ мĕне кирлĕ-ха вĕсем. Кĕтӳçĕре çӳренĕ чухнехи карт та пур.

— Карт? Мĕнлескер вăл?

— Кĕтӳçсем камăн миçе чун выљăхне пĕлме пĕр патак çине картса паллă тăвачĕç. Пĕр ĕнешĕн хăйне пĕр карт картаççĕ, пĕр сыснашăн та çаплах. Икĕ качакашăн пĕр карт. Сурăхсене—4 сурăхшăн пĕр карт картаççĕ. Çапла камăн миçе карт, унăн çавăн тăрăх укçа тӳлес пулаќ, çавăн чул талăк апат çитерес пулаќ...

— Асатте,—ыйтрĕ Ваççă.—Çав картсемпе çулусем халĕ те пур-и сан?

— Сана пурĕпĕр мар-и? Çулувĕ халĕ те çапçутах... Карчĕ хуралнă. Апла пулин те картнă паллисем аванах палăраççĕ.

— Вĕсене есĕ кирлĕ йапаласем мар, тетĕни-ха? Май мар кирлĕскерсем-çке вĕсем. Ара, хамăрăн драмкружок членĕсем укçалах илме пултараççĕ вĕсене. Авалхи пурнăçран илнĕ пйесăсене выљăнă чухне ес асăннă йапаласем шутсăрах кирлĕ пулаççĕ вĕсене. Ан хуйхăр! Артиссене парсан, авалхи йапаласенчен те хăтăлан, искусства та усă кӳрен,—терĕ.

## Шанман

Иван Перепелăв чире кайнă. Арăмĕ хăмла çырлинчен тунă чей тата касторкă ĕçтерсе апаланнă ăна, кĕрĕк витсе тарлаттарнă, аçпирин ĕçтернĕ. Чир хăнк та туман. Аптранă йенне Иван виçĕ стакан пăрăçлă ерех хăрăплаттарса ĕçсе пăхнă. Ĕçнĕ хыççăн, чăн ĕнтĕ, чирĕ лăшах пулнăн туйаннă, анчах ир йенне пушшех аптраса çитнĕ. Иван арăмне йăхăрса илсе халсăр сасăпа:

— Савнă арăмăм!—тенĕ,—тухтăра чĕнсе килха. Хам мĕнле чирпе вилессине пĕлсе кайтăр.

Тухтăр пынă. Вăл, унăн чĕлхине кăларттарса пăхнă, çан-çурăмне шаккаса итленĕ те, Ивана каланă:

— Сывла! Çапла. Çапла. Шалтанрах сывла. Тата. Аллусене малала тăс. Куçна хуп. Çапла, çапла. Урусене чĕркуççи çине чĕркуççи туса лар. Çапла, мĕн ĕçпе пурăнан есĕ?

— Пилĕк çул ĕлĕк вăрă ĕçĕпе пурăннă,—тунман Перепелăв,—халĕ, 5 çул атăçă пулса пурăнап.

— Аллусене тепĕр хут тăсса кăтарт-ха. Куçна хуп. Вара, вара... нервăсем хавшак пирки чирленĕ есĕ. Пĕтĕмпех нервă пирки.

— Пĕр-пĕр имçам илме çырса парас теместĕн-и?

— Имçам илме çырса парăп та, анчах пурнăçна карах улăштарса йамасан усси сахал пуласси курăнсах тăраќ. Санăн халĕ выртсах иртермеле пулаќ, ерех-сăра тумлам та сыпмала мар, амаљне кунне виçшер хут ĕçмеле,—ир, кăнтăр тĕлĕнче тата касхине, апат умĕн. Пĕрер чей кашăкĕ...

Перепелăв арăмĕ панă виçĕ тенкĕ укçана алла илнĕ хыççăн, тухтăр васкаса тухса кайаќ. Çул çинче виçĕ тенкĕ укçине кармана хурас шухăшпа сылтăм аллине кăсйине чиксе йараќ. Анчах паљто кăсйинче те, брӳки кăсйинче те, пиншак кăсйинче те укça карманĕ çук.

— Кăларса илчĕ пули-ха... Хăш самантра ĕлкĕрнĕ?—шухăшласа тăраќ тухтăр.—Çук, кăна ахаљ хăварма йурамасќ!

Постăра тăракан милиционера курсан, извозчикпа лашине хăварса ун патне пырса тăраќ.

— Милиционер йулташ, нумай пулмасќ епĕ чирлĕ çын патĕнче пултăм. Вăл манне укça карманне кăларса йулнă. Укçи нумай мар—икĕ червонĕц анчах, çапах та ахаљ хăварма йурамасќ ăна.

— Укçуна есĕ, тен, ăçта та пулин çухатнă, йе ӳкерсе хăварнă?

— Çук. Кăларсах илнĕ. Чирлĕ çынни вăрă ĕçĕпе пурăнни çинчен хăй каласа пачĕ.

— Апла пулсан, çав çурта кайса дежурнăйа каласа пар,—терĕ милиционер.

Милицире пĕр милиционер илсе Перепелăв патне пырса кĕнĕ вĕсем.

— Мĕн есĕ чирлеме шухăш тытнă, çав вăхăтрах тухтăрсен кăсйисене çаратма тытăннă. Ну-кă, уру çине тăр. Тумлан. Ан кӳште, халех çак тухтăрăн укça карманне тавăрса пар.

— Илмен епĕ, йулташсем! Мĕн есĕр? Çак 5 çул хушшинче никамăннете вăрламан. Пăрахрăм пусĕпех. Тӳрĕ çын пултăм. Етем шутне кĕтĕм... Усăлă етем пултăм... Ылханлă аваллăхран йулнă йăлана пусĕпех пăрахрăм. Ĕненĕр мана.

Çак хушăра пĕр милиционерĕ комод çинче выртакан икĕ червонĕц укçана курах кайаќ.

— Çак укça сан мар-и?—ыйтаќ вăл тухтăртан.

— Манăн пулас,—тет тухтăрĕ.

— Санăн пулсан ил. Укça карманне вăл урăх вырăна кăларса ыватнă ĕнтĕ. Вăрварах ĕçлеççĕ мар-и вĕсем.

Тухтăр тухса кайаќ. Килне тавăрăнсан, ахлатсах йараќ вăл. Укçа карманĕ сĕтел çинчех выртнă мĕн. Икĕ червонец укçи те унтах пулнă мĕн.

— Укça карманне килех манса хăварни вара епĕ?

Тухтăр арăмĕ васкаса ӳксе упăшкине:

— Мĕн укça карманне чикмесĕрех тухса кайрăн тата пайан. Кăшкăртăм—илтмерĕн, Аңутăна чуптарса пăхрăм,—хăваласа çитеймен,—тесе тăраќ.

Шухăша кайаќ тухтăр. Мĕн тумала ĕнтĕ?

— Кайала леҫсе памала пулаҭ, каҫару ыйтмала.

**Тухтӑр вӑрвар тумланса, хайхи икӗ червонӗц укҫана Перепелӑва тавӑрса пама утрӗ.**

## Лайӑх май

Савӑт общчежитинчи Виктӑрӑв хушаматлӑ ҫамрӑк рабочи пурӑннӑ 49-мӗш пӳлӗмре ватӑ йенне сулӑннӑ хӗрарӑм тӑраҭ.

— Пулӑшсам ӗнтӗ, Ваҥушкӑ,—тет краваҭ ҫинче выртакана.—Ара савӑта йапӑх ҫӳрекен пулса карӗ. Йалан ӗҫет. Прогул тӑваҭ. Ӑна ӳкӗте кӗртме пулӑш мана. Прогул тӑвасран хӑтар ӑна.

— Хӑтар тетӗн?—тенӗ Виктӑрӑв ленчешке крoваҭ ҫинчен тӑрса.—Хӑтар, теме вӑл ҫӑмӑл, анчах ӑна...

Карчӑк йӗрсе йама хатӗррине сиссе:

— Ну, йурӗ,—терӗ карчӑка.—Хурӑнташ майпа пулӑшу парӑп... Усси пулсан пырӗ.

Сӗтел хушшине кӗрсе ларса, вӑл пӗр хут татӑкӗ ҫине тем ҫырса, карчӑка тыттараҭ.

— Ку хутпа ман мӗн тӑвас?—тет карчӑкӗ.

— Упӑшкуна тыттар.

Карчӑк, Виктӑрӑва чӗререн тав туса, вӑл панӑ хута хӗвне чиксе хураҭ те, тухса кайаҭ.

Килне ҫитсен хайхи хута хӗвӗнчен кӑларса чей ӗҫсе ларакан упӑшки умне хурса, вулама хушнӑ.

— Камран ку хут?—ыйтнӑ упӑшки, чей чашкине сӗтел ҫине лартса, хутне алла илсе.

— Хамӑрӑн Ваҥушкӑран. Ӗҫкей ачи ҫыраҭ...

Упӑшки хайхи хута, лӗпӗше ҫуначӗнчен тытнӑ чухнехи пек, асӑрханса тытнӑ та, вулама тытӑннӑ:

— „Епӗ, Виктӑрӑв Иван, рабочи, Ҫтепан Йегорчук рабочийе социалисӑмла ӑмӑртӑва тухма чӗнетӗп. Условисем: прогул пӗрре те тумала мар. Брак та, простой та пулмала мар. Ӗҫ тухӑҫне 5 процента ҫити ӳстермеле. Ку зайавленийе епӗ ҫтенхаҫат ҫинче кӑларатӑп тата завкома паратӑп. *Рабочи Виктӑрӑв*.

Степан Йегорчук самантлӑха ним чӗнмен, кайран чышкине сӗтел ҫине ҫапса илнӗ те, шӑртланса кайнӑ, хырман, кӑвакарнӑ сухалне хыҫкаласа кӑшкӑрса тӑкнӑ:

— Ах, йӗпе сӑмса! Ах, шӑркалчӑ! Хӑйне савӑтра ӗҫлеме хам вӗрентрӗм, вӑл ҫавна пӑхмасӑр хӑй мучӗшне ӑмӑртӑва чӗнме хӑйаҭ. „5 процент ӳстерме“ тет. 5 мар, 10 ӳстерӗпӗр. Сана, шӑркалча, кӑтартӑпӑр... Чӑххине ҫӑмарти вӗрентмест. Манпа ӑмӑртса ӗҫлес тесессӗн, сахал мар тар кӑларма тивӗ-ха!..

Тутӑхса кайнӑ перо тытнӑ та, пӗтӗм ӳт-пӗвӗпе сӗтел ҫине ӳсӑнса, ӗҫ тухӑҫне 10 процент ӳстерме пулса, хирӗҫле чӗнӳ ҫырнӑ.

Ик ерне иртсен, Йегорчук карчӑкӗ каллех хайхи Виктӑрӑв умӗнче тӑнӑ. Тутӑр тулли кученеҫ чӗркесе пынӑ.

— Ох, чунтан-вартан тавтӑвавтӑп сана, Ванечкӑ!—тенӗ вӑл Виктӑрӑв ҫине шутсӑр ӑшӑ куҫпа пӑхса.—Ӗнер 300 тенкӗ чиксе тавӑрӑнчӗ. Ӗлӗк 50 та чиксе таврӑнаймастчӗ... Ӗҫме пӑрахрӗ, ахалӗн ӗҫе вӑхӑтра тухса кайаймӑн, тет. Васкаҭ. Сана вӑл май мар вӑрҫаҭ, апла пулин те епӗ сана ҫав тери тавтӑвавтӑп, ҫав тери тавтӑвавтӑп...

Алӑкран такам шакканӑ.

— Кам тата унта?—ыйтнӑ Виктӑрӑв шаккакантан.

— Пирӗнпе пӗр ҫуртра пурӑнакан арӑмсем иккӗн килнӗ,—ӑнлантарса каланӑ карчӑк Виктӑрӑва.—Вӗсене те пулӑшу парах ӗнтӗ. Хут ҫине мана ҫырса панӑ пек вӗсене те ҫырса парсам ӗнтӗ. Упӑшкисене вӗсем те прогул тума пӑрахтарасшӑн.

Ав мӗнле!—тенӗ те Виктӑрӑв, кулса йанӑ.

**Илсарай.**

---

# ЛӐПЛАНТАРАКАН ЕМЕЛ

Пӑчанарти „Победитӗл“ колхозӑн (Йетӗрне р.) йалхуҫалӑх машинӗсем йурпа витӗнсе ларҫҫӗ. (Шӑр-чӑ).

Н. Ҫверчков ӳкерчӗкӗ.



— **Тухтӑр, ӳпке-пӗверӗме, вар-хырӑма ан та пӑх есӗ. Кӑмӑла лӑплантаракан бром ҫырса памӑн-ши, тесе епӗ килнӗччӗ.**

— **Ма?**

— **Хамӑр колхозӑн йалхуҫалӑх машинӗсем йур айӗнче ларнине курсан, кӑмӑлӑм хуҫӑлса кайаҭ.**

— **Ну? Тарӑхан еппин. Камӑн вӑл машинсене пӗр ҫӗре пухса сарайне лартмала пулнӑ?**

— **Манӑн. Хамах вӗт колхоз председателӗ!**

# Чаршав уçӑлсан

Вӑтам Еверкел йалӗн (Похвиçнӗ районӗ, Куйбышӗв облаçӗ) аслӑ урамӗпе пыратӑп. Пӑхатӑп, клуб çумӗнче пӗлтерӳ пур: „Кӗçӗр „Çӗнӗ пурнӑç“ колхозӑн клубӗнче спектаклъ пулатӗ, пиесӑн йачӗ „Пуйан Карук“. Спектаклъ хыççӑн—пирамидӑ, ташӑ, йурӑ. Каçхине 8 сехетре пуçланатӗ. Билетсем илме васкӑр“, тесе çырнӑ.

Епӗ те интереслентӗм, спектаклъ курсах кайас, терӗм. Кӗтӗм клуба. Пӗрисем, çапӑ çинчи сала кайӑкӗсем пек, хӗвӗлçаврӑнӑш шӗкӗлчеççӗ, теприсем шит тӑршшӗ те пурне пысӑкӗш пируссем çаврӑнӑ та, пӑравус пек тӗтӗм мӑкӑрлантарса лараççӗ. Клубра çӗртен те çӳлтен хура пӗлӗт пек тӗтӗм çаврӑнатӗ. Пуртӑ çаксан та ӳкес çук. Мачанала пӑхрӑм та кӑштах йӑванса кайаттӑм. Унта... Ерешмен картисем волейбол çетки карса хунӑ пек каркаланса тӑраççӗ. Урайӗнче тата, чӗркуççи таран çӳпӗ-çапӑ йапӑнса выртатӗ. Акӑ ӑçта „кулътурӑ“ çурчӗ!—тесе шухӑшларӑм.

Акӑ сехет йӗпписем 10 сехет çине çитрӗç. Спектаклъ çаплах пуçланмастӗ.

— Час пуçлатӑр-и?—кӑшкӑраççӗ колхозниксем.

— Пӗлместпӗр-ха, клуб пуçлӑхӗ каçхи апат тума кайрӗ,—илтӗнчӗ пӗр сасӑ.

Халӑх шавласа кайрӗ. Кӗтсе ывӑнчӗç пулас.

— Пуçлӑр хӑвӑртрах. Кӗтсе ывӑнтӑмӑр. Ыран ирех ӗçе каймала. Сакӑр сехетре пуçлатпӑр тесе пӗлтереççӗ те, халӗ 10 сехет иртрӗ вӗт, çаплах пуçламаççӗ.

— Пуçлӑр хӑвӑртрах, ан тарӑхтарӑр!

Хм... халех пуçлатпӑр,—сас пачӗ анчах клуба пырса кӗнӗ клуб пуçлӑхӗ Петров, унтан пичӗке пек кӳпӗнсе кайнӑ портфелъне уçса ухтаркаларӗ те:—Тӗфу! Пиесӑ киле манса йулнӑ, тесе, сунарçӑ хӑратнӑ хир качаки пек, вӗçтерчӗ килнеле. Ытла хытӑ кайнӑран пуçне манса хӑварман-ши, тесе шухӑшларӑм. Пуçӗ пуррипе çуккине асӑрхаса та ӗлкӗреймерӗм, куçран çухалчӗ Петров йулташ.

Инкек çине синкек, шӑши вучӗле йӑлтӑртатса ларакан лампи тӑлт турӗ те тӑпах пулчӗ. Клуба каçхи тӗттӗм хупласа илчӗ.

— Ах, краçин пӗтрӗ пулас,—терӗ те сторожихӑ Праски, васкаса краçин илме тухса кайрӗ.

Клуб пуçлӑхӗ Петров, хытӑ хӑваланӑ лаша пек, йӑвӑррӑн сывласа, пӑс кӑларса пырса кӗчӗ те, васкаса: „халех пуçлатӗ“... сӑмахне каласа пӗтеричченех краçин йарса тӑракан сторожихӑна çитсе çапӑнчӗ те, ӑна краçинпа шыва кӗртсе хӑварчӗ.

— Çапла кирлӗ-ха ӑна, краçинне пасӑрах хатӗрлемеле, клуб урайне те çултаlӑкра икӗ хутчен çеç çӑватӗ, тесе ах-ха-ха-хах! кулса йачӗ клубри халӑх.

— Ну, йулташсем! Пуçлӑпӑр, шӑпланӑр. Кӗçӗрхи вечӗрта программӑ тӑрӑх—йурлаççӗ, ташлаççӗ, унтан...

— Тавай пирвай спектаклъ!—кӑшкӑрчӗ халӑх...

— Хатӗрленетпӗр-ха!—илтӗнчӗ сценӑ çинчен пӗр шӑнкӑрав пек çинçе сасӑ.

Акӑ чаршав уçӑлчӗ. Сценӑ çине 8 çулхи икӗ хӗрача тухса тӑчӗç те „Савни анатӗ шыв хӗрне“ йурра йантратса йачӗç... Халӑх шӑп пулчӗ. Çула пулсан шӑна вӗçсе иртни те илтӗнмеле.

Вӗсем хыççӑн **9—10 çулхи** ученицӑсем тухрӗç. Вӗсем подгорнӑй кӗввипе **йурату** йуррисем йурласа ташлама тытӑнчӗç.

— Ах, манӑн ученицӑсене усала вӗрентет ку Петров йулташ, кайӑр килӗрсене, уроксене хатӗрленӗр,—терӗ пӗр учитӗл сценӑ умне пырса.

Автансем пур йенчен те çурçӗр çитнине пӗлтерсе: ку-ку-ре-ку-у-у-ум! йантратса йачӗç. Пожарниксем автан сассисене хӑйсен чанне 12 хутчен хыттӑн çапса çирӗплетрӗç. Чан сасси таçта вӑрмана кайса çапӑнса инçете кайса çухалчӗ.

Çак сасӑсене илтсен клубри халӑх пӑлханма тытӑнчӗ.

— Е-ей, кусен спектаклъӗ пулаймастӗ пулас кӗçӗр. Атӗа, матка, кайса канар, ыран ирех ӗçе каймала,—терӗ пӗр хулӑн саслӑ çын. Халӑхсем пӗрин хыççӑн тепри пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн саланма пуçларӗç.

— Йулташсем! Ан саланӑр, халех пуçлатпӑр,—кӑшкӑрчӗ клуб пуçлӑхӗ Петров.

Халӑх лӑпланчӗ. Чаршав та уçӑлчӗ. Акӑ сценӑ çине „Пуйан Карук“, унӑн арӑмӗ тата ывӑлӗпе кинӗ ытакланса тухрӗç. Ак кунта, татӑклӑнах килӗшӳсӗр выранӑ сиксе тухрӗ. Пуйан Карук ролъне 12 çулхи вӗренекен ача выляатӗ, унӑн арӑмӗн ролъне 13 çулхи ученицӑ, Карук ывӑлӗн ролъне 30 çулхи арçын выляатӗ тата кӳршӗ карчӑкӗн ролъне хӗрарӑм тумӗпе тумланнӑ арçын выляатӗ.

Ку татах пыраччӗ-и, мӗн-и, анчах сценӑ çине тухнӑ артиссем темӗншӗн шыв сыпса ларнӑ пек шӑп лараççӗ. Пӗр-пӗрин çине çех пӑхса илеççӗ. Епӗ пӗр-пӗр калаçман сценӑ пулӗ тесе шутларӑм. Анчах епӗ йӑнӑшнӑ. Калаçман сценӑ мар, вӗсенӗн суфлъор пулман иккен.

— Тӗфу!.. Нимӗнпе те ӑнтарса йамали çук. Вӗçтерӗр хӑвӑртрах суфлъора чӗнме!—кӑшкӑрчӗ Петров. Анчах, ӗç тухмарӗ. Суфлъор, сасси уçӑрах пултӑр тесе, пырне çуттипе чӳхенӗ те, чӳхенӗ май астумасӑр çӑтсах йанӑ, çавӑнпа вара „чирлесе“ йӑвансах кайнӑ.

Акӑ урӑх суфлъор тупрӗç. Аван вӗреннӗ çын, нумай. Ӗç „ӑнса“ кайрӗ. Калаçаççӗ, ӗçеççӗ, йурлаççӗ. Клубри халӑх та кулатӗ.

— Чарӑнӑр, чарӑнӑр, ан шавлӑр! Выляама кансӗрлетӗр!—кӑшкӑрчӗ артист сценӑ çинчен куракан халӑха.

— Мӗн тетӗн? Тепӗр хут вула, илтместӗп!—кӑшкӑратӗ выляаканӗ выляама чарӑнсах. Суфлъор татах вулатӗ.

Халӑх ӗç тухманнине кура пӗрерӗн-икшерӗнех саланса пӗтрӗç. Клуб пушанса йулчӗ. Клуба: клуб пуçлӑхӗ, сторожихӑ тата епӗ, „Хӗрлӗ вӑлта“, тӑрса йултӑмӑр. Тата ман хыçӑмра 4—5 йӗке-хӳре спектаклъ выляама пуçланӑччӗ.

Артиссем халӗ те спектаклъ выляаççӗ-ха. Ӗçеççӗ, ташлаççӗ, вӑрçаççӗ.

Епӗ кӑна: ме, çӑрауççине, спектаклӗр пӗтсен клуба питӗрсех тухӑр, тесе калама çӑвара карнӑччӗ...

— Ан выляӑр, клубра пӗр çын та çук!—кӑшкӑрчӗ пӗр артисӗ.

Чаршав хупӑнчӗ. Вечӗр пӗтрӗ.

**Хӗрлӗ вӑлта.**

# РЕСТОРАН—ТЕАТР—РЕСТОРАН



Илемлӗ кӑна ҫын. Аван тумланнӑ. Гимнаҫтӳркӑ, галифе, атӑ...

Аванах пурӑннӑ вӑл. Ним хуйхи-суйхи те пулман. Текех сутӑ тунӑ Иетӗрнери ресторанта. Ерехпе, катлетпа, „шашарит" тунӑ" ҫтерлӗтпе. Ну, паллах ӗнтӗ, хӑй те ӗҫкеленӗ ӑшне кантармалӑх, хӑй те „шашареннӑй ҫтерлӗт" ҫикеленӗ. (Айӑпласа каламастпӑр епӗр: ресторан директӑрӗн хӑй сутакан тавара тутанса пӑхмалах ӗнтӗ).

Ҫапла пурӑннӑ ҫӗртех, сасартӑк, ҫак лӑпкӑ директӑра райӗҫтӑвкома чӗнтернӗ.

— Итле-ха, Прытков йулташ,—тенӗ ӑна унта,— ес професҫи улӑштарма шутламастӑн-и?

— Ма апла?—тӗлӗннӗ ку.—Мана ресторанта та начар мар. Ӗҫ килӗшет, арӑм та тавуђнӑ.

— Ҫук, ҫапах та... Калӑпӑр, санӑн театр директӑрӗ пулас кӑмӑл пулмӗччӗ-ши?

— Театр?. Ара, епӗ вӗт... театр курманни нумай пулат те...

Анчах, ӑна каласа пӗтерме паман. Пӗр ҫур сехет хушшинче вӑл ресторан директӑрӗнчен театр директӑрӗ пулса тӑнӑ.

— Ех, где наша не пропадала!—тенӗ вара вӑл хӑй те, аллипе сулса.—Была не была! (Ҫаплах, чӑвашла пӗр сӑмах та пӗлменнипе вырӑслах каланӑ).

Каланӑ-тунӑ. Ресторан директӑрӗ колхоз театрне йышӑннӑ.

Коммерсант—коммерсантах ӗнтӗ вӑл. Ӑна укҫа ытларах пултӑр. Ҫавӑнпа та ҫӗнӗ директӑр театр ӗҫӗ ҫине тӳрех коммерцилӗ куҫпа пӑхнӑ.

— Ах, финплан тулмасть, тетӗр-и? Ничево, тулать. Двадцать и двадцать—рупь двадцать тенӗ пекех пулать.

Вӑл суйман иккен. Театрпа пӗрремӗш маршрута тухса кайсанах, колхоз правленисене ултала ма тытӑннӑ. Догӑвӑр тунӑ чухне хакне кӑтартман, анчах кайран—„пирӗн ҫпектакӑлђ 400 тенкӗ тӑрать", „чӑн йӳнӗ хак—300 тенкӗ", „ҫпектакӑле унтан кайа хакпа сутсан пире Совнарком айӑплать" тесе суйса, укҫана сӑптӑра-сӑптӑра илнӗ. Ҫавӑншӑн чылай ҫӗрте ӑна „урӑх нихҫан та ан килтӗр пирӗн пата санӑн театру" тесе ӑсатнӑ. Чӑнах та ӗнтӗ, финплана ытлашшипех тултарнӑ...

Анчах артиссене шалу памасӑр тӑнӑ. Лешсем ҫине тӑрсах ыйтнӑ. Ку паман. Лешсем татах ыйтнӑ. Вара ку артиссенчен тарса ҫӳреме тытӑннӑ. Грузовик ваљђи скатсем илетӗп тесе, кирлӗ таран укҫа чикнӗ те, Горькине тухса кайнӑ, анчах та паллах, нийепле скатсем те илсе килмен—хӑйӗнпе арӑмӗ ваљђи коҫтӳмсем ҫӗҫ туйаннӑ (коммерсант вӗт!).

Актӳрсем тарӑхса ҫитнӗ. Кайатпӑр кунтан, теме пуҫланӑ. А. Прыткова ку нихӑш йенчен те тивмен. Кашни кун апат ҫиме йуратакан артиссенчен хӑтӑлма хатӗр пулнӑ вӑл. Хӑйех каланӑ:

— Камӑн кайас килет—зайавлени парӑр, чарса тӑмастӑп!—тенӗ.

Тӳрех ҫур коллектив заявлени панӑ вара. Прытков пурне те ӗҫрен хӑтарнӑ. Кунпа пӗрлех, хӑй те ӗҫрен хӑтӑлма кӑмӑл тунӑ. (Коммерсант ӗҫӗ мар ку, тенӗ пулмала...) Никамран ыйтса-тусса тӑмасӑрах, кайала ресторана кайнӑ та, ӗлӗкхи вырӑнне кӗрсе ларнӑ. Театр ӗҫӗ ҫине сурнӑ. Хаљ чиперех пурӑнать. Ӗлӗкхи пекех ерехпе, катлетпа, „шашаренӑй ҫтерлӗтпе" сутӑ тӑвать. Театр ҫинчен маннӑ ӗнтӗ. Иртсе ҫӳренӗ чух кӗрсе тухма пултаратӑр ун патне, аванах ӗҫтерсе-ҫитерсе йарӗ...

**Леонид Агакӑв.**

---

## Талантлӑ пӳрне

Н. Ҫверчков ӳкернӗ.



**— Ай-уй, пӳрнӳ мӑнланса кайнӑ-ҫке сан!**

**— Вӑл мӗ-ӗн! Вӑл пӳрнерен ӗмсе тунӑ ҫметӑ мӗнле мӑнланса кайнине курасчӗ сан!**

# АРЧАРАН ШĂТĂКА

*Иван Мучи*

Иртнĕ тунтикун—пасар кун. Çав йатпа пасара утрăм. Пасарта мĕн пуррипе çуккине пăхкаласа çÿреме аван пултăр тесе, ĕнер çеç илнĕ ĕçукçин вуннăмĕш пайне чиксе кайрăм.

Епĕ çитнĕ çĕре пасар кĕрлесе çеç тăрат̆. Пĕçерсе çимели çимĕçсем те, пĕçермесĕрех хырăма аван кайакан çимĕçсем те тем чухлех йăтăнса тухнă. Илес кăмăлу пулсан—ил, кăмăлу çук пулсан—ан ил.

— Кирлĕ çимĕçсене, сăмахран, купăстине, паранкине, аш-пăшне арăм туйанĕ, ман вак-тĕвек йапаласем питĕрсе усрама пысăк мар арча туйанса тавăрăнасчĕ-ха,—тесе арча сутакан пĕр те йединоличник, те колхозник патне утса пытăм.

Арчисем май çук селĕм. Пăхнăçем туйанас килтереççĕ. Пĕр пысăк мар арчине хам патала ăшшăн пăхаканине, пÿрнепеле тĕллесе кăтартрăм та, сутаканнинчен ыйтрăм:

— Ку арча мĕн хак тăрат̆, терĕм.

Вăл мĕн хак тăнине тунмасăр каларĕ.

— Кăшт та катмастăн-и?—тесессĕн:

— Катса пама йурамĕ. Ма тесен, ыйăх катса тунăскер. Калаçса çавар тутине сайа ан йар,—терĕ.

Шÿт тума йуратакан çын пулни кăмăла карĕ. Шăнкăрт укçа кăларса тыттартăм, арчашăн.

Халĕ ĕнтĕ ăна питĕрме çăра туйанмала. Çăрасăр арча, пичетпе штамп пусман хут пекех, ниме тăмаст̆.

Арча питĕрмели çăрасем промсойуз лавки сутат̆. Ăна туйанма та, укçа тÿленĕ хыççăн, тивĕç илтĕм.

Киле кайма хĕсĕр ĕнесем, сĕмсĕр качакасемпе сыснасем сутакан урампа тухмала.

Ман пуçа сысна çури туйанас ăслă шухăш пырса çапăнчĕ. Çавăнпа сысна сутакан патне пырса тăтăм. Сысна çури мĕн хак тÿлесен ман пулассине ыйтса пĕлтĕм. Ытлашши хаклă туйăнмарĕ пулин те, епĕ сысна çури вăл хак тăманни çинчен хуçипеле дискуççи пуçласа йатăм.

Тавлашсан-тавлашсан, сысна çурин тĕрĕс хакне хуçипе иккĕн шыраса тупрăмăр та, ман 25 тенкĕ укçам вара ун аллине, ун сысни—ман алла куçрĕ.

Туйаннă сысна çури ман тапаланма тата çуйăхма йуратаканни пулнă мĕн. Ĕçерĕнсе тарасшăн.

Пасарти çынсем, сысна çуйăхнине кура, тек пăхаççĕ ман сăнран. Мĕн чул патăн ку усала, тесе ыйтаççĕ хăшĕсем.

Ыйтакансенчен хăтăлас тесе, тата çĕклесе кайма çăмăллантăр тесе, сыснана арчана персе чикрĕм, çăрапа питĕрсе илтĕм.

Ман сысна арчара та „соло" йурласа ларат̆. Лăпланасса пăхмарăм, киле утрăм.

Çухăракан сысна çÿрипе автобус çине лартмарĕç.

Автобус чупакан урампа çуран кайсан-кайсан, Госбанкăран та иртсен, хуњама карчăк йенчен турту тивекен етеме тĕл пултăм.

— Çÿжет илсе таврăнатни?—сăмах хушрĕ катаранах.

— Çÿжет? Мĕнле çÿжет?

— Арчара çухăрса пыракан... ку санăн фелйетон çырмали çÿжет мар-и? Пасарта туйантăн-и?—терĕ те, ал пачĕ.

— Мĕн есĕ, çук турă хупламанскер, манран мăшкăлан,—тетĕп хайхине.—Хурăнташ майпа, сан çак сыснан çаварне хуплама ăс тупса парасчĕ мана.

Арчана çĕре лартрăм.

Вăл мана: „мĕн чул патăн"? епĕ ăна: „çав хак патăм"; вăл мана: „мĕнле пурнан"; еп ăна:—ху мĕнле?.. тата ытти те... сăмах вăл вакланнă çемĕнвакланма йуратат̆. Хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе килте мĕнле „мероприйатисем" йышăнкалани çинчен самай тутлă калаçса тăнă хушăра, ман арчари сысна çури хупăлчине уçнă та, тухса кайнă. Урам тăрăх сиккипех тарат̆.

— Орйох! Тыт, тыт, тыт!—тесе, хурăнташа пăрахсах, хăвалама тытăнтăм. Мотоциклетсĕр ăçтан хăваласа çитен ăна. Сыснан ури тăваттă вĕт, ман—иккĕ кăна. Тăват уралласкер, ĕрĕхтерсе пынă хушăра, коммунхоз иртнĕ çуркуннех алтса хунă водопровод шăтăкне пăлтăрт кĕрсе ÿкрĕ. Тытасах пулсан ĕнтĕ ман ун хыççăн ним шухăшласа тăмасăр сикмеле. Анчах шăтăкĕ, вилĕ шăтăкĕ пекех тарăн-çке, тÿрех сиксен, килте сысна ĕрчетес ĕçĕн инваличĕ пулăн. Çавна аса илсе, тÿрех сикес темерĕм. Малтан ик хул çине, турник çинчи пек, уртăнса сылтăм урапа сулахай урана шăтăкала усрăм. Вара, урана ыраттарасран хăрас килнĕ пулин те хăрамасăр, шăтăк тĕпне тăрст! сиксе анса тăтăм.

Сысна çури, хăйне арчана татах хупса лартасран хăранипе, мана курсан татах тарма тытăнчĕ. Тытаймарăм. Хÿринчен тытăннăскерех карт турттăнса тарса хăтăлчĕ манран. Шăтăкрискер ара вăл ăçта тарса хăтăлма пĕлнĕ, тейĕр есĕр. Ун пек сăмахсем каласа ыйтаттăр пулсассăн, есĕр водопровод канавне мĕнле йĕркепе алтса кайнине аса илеймерĕр. Водопровод хывма урам тăршшипех тарăн шăтăксем алта-алта хураççĕ (ăна курнă ĕнтĕ есĕр те). Кашни шăтăк—пилĕк пусăм. Водопровод трубине хывса каймашкăн малти тарăн шăтăкпа кайри тарăн шăтăк хушшине, пасартан илнĕ сысна çури кĕмелĕх, шăтăк шăтарса тухаççĕ. Ман сысна çури çав шăтăка кĕрсе кайса тарăн алтнă тепĕр шăтăка пырса тухрĕ. Умра çĕр алтса тунă çтена. Малала кайма çук. Ӳлĕм аш тăвас сыснана тытмасăрах шăтăкран хирĕлсе тухас шухăш тытрăм. Ним тунмасăрах каласан, кĕлеткемпе те, ик урампа та, ик аллăмпа та тата пуçăмпа та хирĕнкелесе аран тухрăм шăтăкран.

Хуњама карчăк йенчен хурăнташ пулакан çын, епĕ шăтăкран тухасса кĕтсе тăрас темен. Килне кайнă. Хăйамат етемĕ, çитес уйавра пырăн-ха ман пата. Пырсассăн, сăра-ерех мар, пĕр стакан чей те тытса ĕçеймĕн. Еп сана, шуйттан пуçĕ, асăнтарăп-ха!..

Çÿлтен пăхатăп та, ман усал сысна çури те пĕр тарăн шăтăкра, арбуз хуппи çисе тăрат̆.

— Орйох!—терĕм.

Водопровод труби вађђи шăтарнă шăтăка

кěрсе каллех йапартах çухалчě. Пěччен тытас çук. Йуртрăм киле. Арăма чěнме. Сысна çури кăларма. Облавăпа.

Арча йатса ěрěхтерсе çитрěм хам ачан амăшě патне.

— Аҕа,—терěм,—арăм, сысна çури кăларма!

— Мěнле сысна çури?

— Арчаран тухса тарни.

— Мěнле арчаран?

— Çак арчаран. Унта манăн сысна çури пурччě. Халě куратăн—çук. Çук вěт, а? Çук пулсан, аҕа часрах шăтăкран кăларма. Пěччен кăларай-марăм. Иккěн иккěнех, сыснине тытаймасан та, шăртне те пулин пěрер ывăç кăларса килетпěр...

— Кам сысни? Ăçта анса кайнă?

— Çăва шăтăкне. Çул çинче консуљтаци парăп...

Çур сехете йахăн ырасан, сысна çури хăш шăтăкра çўренине чиперех куртăмăр. Арăма малти шăтăка, сасă кăлармасăр, сикме хушрăм, хам сысна çўренě шăтăка антăм. Иккěн икě йенчен хупăрласа, аран тытрăмăр шуйттана.

Тытасса тытрăмăр та-ха, анчах сысна çурине шăтăкран кăларасси çăмăл ěçех марри сисěнчě, мěншěн тесен шăтăкě майсăрах тарăн. Пў çитмест. Пусма кирлě. Апла пулин те, майлаштаркаласа кăлартăмăр. Пусмасăрах. Ăспа. Хам айалтан патăм, арăма çўлтен тыттартăм. Вара, ўлěм, темиçе уйăхран, окăрăк çийес ěмěтěм те хам пата таврăнчě. Чунăм аранах лăпланчě, йусанчě, анчах арчан, сысна çури хăйпăтса йанă тимрине (питěрмелине) йусаттарма пайан кунччен те кайса параймарăм-ха. Ак сана пасарта илнě арчан качěстви! Вообшче каласан, пасартисем кăна мар, хăшпěр предприйатисем те хăш чухне качěствă йенчен начар йапаласем тукаласа кăлараççě. Кооперацисем те—хăшěсем.

Акă, пěлетěр пулсан, иртнě ернере епě урам комитечě йăхăрнипе пухăннă собранире лараттăм. Докладчик сăмахне киленичченех итлерěмěр, пренисенче тăраничченех калаçрăмăр. Панă сěнўсене пурне те хут çине ўкерттертěмěр. Унтан сасăлама тытăнтăмăр.

Сěнўсене кашнинех уйрăмăн илсе сасăласа тухма кăмăл турăмăр.

— Кам килес çул хамăр пурăннă урамăн тротуарěсене асфаљт сарса тухмала тăвасшăн—аллăрсене тăратăр,—терě предçедатěл.

Пурте тăратрěç. Епě çеç тăратаймарăм. Ма тесен аллăмсем иккěшě те тăрасшăн мар. Чул пек хытнă. 20 килограм груз çакса йанă пек. Çўлеле çěкленмеççě. Айалала усăнаççě.

Вара сасăсăр йулас мар тесе:

— Ман сасса та шутла. Урама асфаљт сарасса епě те чунтан-вартан ырăлатăп,—тесе кăшкăрса каларăм сасăсене шутлаканнине.

— Ырăлатăнах пулсан, аллуна ма тăратмарăн?—ыйтрě манран.

— Аллăм, тăратас тесен те, тăма пултараймарě,—терěм.

Халăх кěрлесе кулса йачě. Хăшěсем, кула-кула ал çупа пуçларěç: çат! çат! çат! тутараççě.

— Кулă мар кунта, ачасем! Чăннипе калатăп. Ěненместěр пулсан, çири пинжака хывсах кăтартам ак.

Вăрвар пинжака хыврăм та, саркаласа, халăха, кăтартрăм.

— Çак пинжака тăхăнтартсан, ал тăратма майран пуссан та пултарас çук. Пăхăр ара—унăн çаннисене мěнле çěлесе лартнă. Çанă çавăнта пулмала-и, е? Çěвěçсен мастерскойěнче çěлеттерсе таврăннă хыççăн пайан пěрремěш хут тăхăнса тухрăм. Етем кулли пултăм...

Халăх тата кулаҕ. Анчах манран мар. Лешсенчен. Çěвěçсенчен.

Ал тăратайманни мар кулăшла, çěвěçсем йапăххи кулăшла.

# ШУРĂ ВĂҔĂР ХАЛАПĚ

Отто Шмидт йачěпе тăракан колхозăн (Куйбышěв облăçě, Похвистнě районě) МТФ витине çилпе картланă, пěлěтпе витнě. Кěрхи сивě çил пырса çапсан, ěнесем хăйсен кěлеткисемпе çиле картлаççě. Кěрхи сивě çумăрсем çума тытăнсан, хăйсен тирěçемпе витěнеççě. Уйар каçсенче пěлěт çинче миçе çăлтăрне хисеплеççě.

Çавăн пекех лашисен витисем те: чўречисене улăм çинчěкěпе кěленчеленě. Анчах, вайлă çил пырса çапсан, çилпе пěрлех улăм кěленчисем вěççе тухса çўлеле хăпарса кайаççě те таçта инçете кайса хўтте ўкеççě. Вěсем выранне коњухсем кайалах улăм çинчěкěпе кěленчелеççě. Кунсеренех çапла темиçе хут пулса иртет. Шурă вăҕăр халапě пекех туйăнаҕ.

Анкартийěнче улăмěсене лайăх купаламан, арписене улăмпа витмен, çăвакан йěпе йурпа çумăр шывěсене чистах хăйсен ăшне çатса лартаççě. Анкарти талккишпе улăм арпа сарăлса выртаҕ. Унта кунěн-çěрěн тěрлě выљăх-чěрлěх кěтěвě-кěтěвěпе тěшěреççě, çийеççě, çинчěклеççě. Куçмин йулташ: „халě, шартлама сивěсем пуçланаччен çисе мăнтăрланса йулсан, çинчěкпе те хěл каçма пулě", тесе шутлаҕ пулас.

Хěлле вара, хěлле... Отто Шмидт йачěпе тăракан колхозăн выљăхěсен, пуринчен ытла ěнисен, хěллехи шарглама сивěсенче нимěнле хўтлěх те çук. Вěсем мулкачăсем пек йур кěрчěсем айне чаваланса кěреç-ши, йе тата урăх мељ тупěç-ши?—пире паллă мар.

Иванов коњух, 18 лашана пěр пěччен пăхасси-пе çăмарта тавас чăхă пек кускаласа çўрет, çапах та ěлкěреймест. Колхоз предçедатěлě Куçмин йулташ виçě уйăх хушши ěнтě: „пайан марха тепěр икě кунран тупса парăп" тесе ыранпа тăрантараҕ.

Выљăхсемпе коњухěсем çапла тарăхса, чěтресе тата йěпенсе тăнă вăхăтра колхоз руководитěлěсем кěрхи сивě çилсенчен тата çумăрсенчен хăранипе ăшă кăмака çине хăпарса урисене мăрйене тапса, маччанала сурса кăна выртаççě. Выљăхсем çинчен аса та илмеççě.

З. Краснов.

# ПИРĔН ИЗОБРЕТЕНИСЕМ

Н. Çверчков ÿкерчĕкĕсем.



Йелчĕк районĕнчи „Осоавиахим“ колхозăн çуна пит сахал. Çуна выранне, çакăнта кăтартнă пек майлаштарса тунă сĕтеле кÿлсе кайма пулаť. Сухална касăртса ларса пыр кăна, тухсах ÿкмĕн,—ан хăра!



Шăхасан районĕнчи „Хĕрлĕ Сормăвă“ колхоз фермин сысна вити çук. (1937 çултанпа туса пĕтермен). Мăн вите çук пулсан, сыснасене çакăнта кăтартнă пек пĕчĕкçĕ „витесем“ туса памала. Йÿне лараť, ăшă та пулаť.




Художникăн ку проекчĕпе килĕшмерĕмĕр епĕр. Вăл калаť: сивĕ çуртра, одеял выранне, шăрăх Африкă карттипе витĕнсе çывăрмала, тет. Африкă картти пулăшаймĕ ĕнтĕ, пирĕн çĕр шывра нимрен те йÿнĕ тата нумай вутта туйанмалах пулаť.



Вăрмар районĕнчи Йампай колхозра, правлени вутă туйанма ÿркеннĕ пирки, улмуççи пахчи картине сÿтсе правлени çуртне ăшăтаççĕ. Вутă çук пулсан, вĕрекен сăмаварăн çакăнта кăтартнă майпа (трубасем витĕр) кайакан пăсĕпе усă курса ăшăнма пулаť.

# *Кĕскен— хамăр йулташсем çинчен*

### Иван Малкай

Йурлас килет ун вĕçĕмсĕр,
Йурлаť вăл çавăнпа.
Çыраť, çыраť пĕр вĕçĕмсĕр—
Вĕçĕмсĕр рифмă çавăраť,
Тата çапла та пулкалаť—
Джамбул „майлă“ та çыркалаť.

### Нестĕр Йанкас

Нумай ун калас сăмахсем,
Тулли те ăшă сăмахсем.
Шăрантараť вăл йурăсем,
Чаплă та хаклă йурăсем.
Сем, сем... сем, сем, сем, сем—
Ăста-ши вĕсен вĕçĕ-хĕррисем,
Ма сахал-ши „Чапай...“ йе „Йалта“ пек
сăвăсем?

### Илле Тукташ

Тип çыранлă „Вăкăр çырми“ ăна
Пайтах вăхăт тертлентерчĕ.
Халĕ Тукташ çав çырмана
„Шурă розă“ лартса ӳстерчĕ.

### Усли Васлейĕ

Ун çӳçĕ вăрăм та кăтра—
Оргиналлă поет пекех.
Тата çак çитес вăхăтрах
Пуласшăн шевченковед.

### Уйăп Мишши

Начар сăвăсем çырас ĕç—уншăн йут.
Çирĕп тытнă çĕн лирикăн чĕлпĕрне.
Вăл утланнă урхамах та—çивĕч ут,
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет.

### Иван Ивник

Çырчĕ йурă, çырчĕ сăвă—
Чылай чупрĕ, супрĕ.
Хăйĕн тĕп-тĕрĕс çулне вăл
„Телей çулĕ“-пе çеç тупрĕ.

### Леонид Агакăв

Артиссене „йатлас“ ĕçре—
Йалавинпа вăл йĕкĕреш.
Рецензи çырмала тесен—
Сив Атăлра шыва кĕрет.

### Алакĕр Васлейĕ

Хитре çыраť вăл çырасса.
Темшĕн тытаť-ха „Ураса“?
„Тăвăл хĕр“-не те çав тери йуратрĕ,
Анчах ăна таçта çухатрĕ.

### Максăм Йастран

Ун сăввисем пит шатрашкалă,
Тумхахлă çул пек йака мар.
Нумай çыраť, сахал вулаť вăл халĕ,
Çук, тет вăл, вăхăт лайăх йакатма.

### Ухсай Йаккăвĕ

Çĕнĕ „Туй“-ра пуçне ухса
Сиксе ташлаť пирĕн Ухсай.
Манмасť хăйĕн ĕçне те—
„Пуканесен бригади“-нче ĕçлетĕ.

### Александр Алка

Ун „Шыв арманĕ“ лайăх авăраť:
Поемă хыççăн поемă кăлараť.

### Уйар Хĕветĕрĕ

Час-часах „Пасарта“ пулаť. Киле килет.
„Партизансем“ патне те çитме ĕлкĕрет.
„Иртнĕ тапхăр“-сене аса илет,
„Арахман“-сене колхоза кĕртет.

### Александр Кăлкан

Вăл „Анисса“ аппана качча пачĕ.
Пачĕ те, лăпланчĕ.

### Данилăв-Чалдун

Такçантанпа шухăшласа
Чалдун тупрĕ лайăх меслет:
Пĕр калава 7—8 йат парса
7—8 çĕрте вăл пичетлет.

### Мрайка Микихверĕ

Каларĕ вăл: „Лайăх пурăнатпăр“.
Тепле пурнаť. Çырмасť. Курмастпăр.

### Айзмăн Микули

Çăмăл мар мĕн комеди çырас ĕçĕн терчĕ.
„Çӳпçи“ çине „хупăлчине“ витĕнтерчĕ.
Татах çыратпăр, теттĕр?
Йураť! Кĕтетпĕр.

М. П.

# ШАМПА

*А. П. Чехăв*

Çулахи ир. Сывлăшра шăпах; шыв хĕрринче шăрчăк кăна чĕриклетет, тата тасрта ăмăрткайăк ами хăравçăн мăрăлтатни илтĕнет. Тÿпери сапаланнă йур пек курăнакан çÿхе пĕлĕтсем ним хускалмасăр тăраççĕ... Купалђнă тунă çĕрте, симĕс хăва турачĕсем айĕнче кăтра хĕрлĕ пуçлă, çăмламас питлĕ çÿлĕ ырхан мужик—Карачăм платник шывра мĕшĕлтетет. Хашкаť хăй, йăвăррăн сывлаť тата кусĕсене хытă хĕснĕ май йăмра тымарĕсем айĕнчен темскер туртса кăларма тăрăшаť. Пичĕ унăн тарпа витĕннĕ. Карачăмран пĕр хăлаç айакра, виçкĕтеслĕ питлĕ тата китайĕçăнни пек хĕсĕк те пĕчĕк куçлă çамрăк, курпун мужик—Ђубим платник мăй таран шывра тăраť. Карачăмпа Ђубим иккĕшĕ те кĕпе-йĕмпех. Иккĕшĕн те шăннипе ÿчĕсем кăвакарнă, мĕншĕн тесен, шывра ĕнтĕ вĕсем пĕр сехет ытла лараççĕ...

Мĕн ес пĕрехмай аллупа пĕр вырăна тĕртетĕн?—тесе кăшкăраť курпун Ђубим, сивĕ тытнă чухнехи пек чĕтресе.—Ех, анкă-минкĕ! Тыт есĕ ăна, тыт, унсăрăн тараť вăл анафемă. Тыт, тетĕп.

— Ниçта каймасť... Ăçта кайма пултартăр-ха? Вăл тымар айне кĕрсе ларнă...—ответлет Карачăм, карланкинчен мар, хырăмĕ ăшĕнчен хăйлатса тухакан хупă сассипе.—Йăпăлка мур; ниçтан тытма май çук.

— Сăххисенчен тыт ес, сăххисенчен...

— Сăххисем курăнмаççĕ... Чим-ха, таçтан тытрăм... Тутинчен тытнă... Çыртаť, мур!

— Тутинчен ан турт, тутинчен ан турт—вĕçерĕнсе тарĕ. Сăххисенчен тыт ăна, сăххисенчен тыт! Ак каллех аллăпа тĕрткелеме пуçларăн. Ытла та ăнланман мужик-çке есĕ, каçар çÿлти турă амăшĕ! Тыт!

— „Тыт“...—витлет Карачăм.—Тупăннă йепле командер. Хăвăн пырас та тытас, курпун шуйттан... Мĕн туса тăратăн?

— Тытăттăмчĕ епĕ, тытмала пулсан... ăçтанха ман пек пĕчĕк пÿллĕ çынăн тарăн шывра тăма май пур? Пÿ çитмест унта.

— Тарăн пулин... Иш ес...—Курпун аллисемпе сулкаласа, Карачăм патне ишсе пычĕ те, туратсенчен йарса тытрĕ. Анчах ури çине тăма тăрсанах, вăл пуçĕпех шыва путрĕ те, хăмпăсем кăларчĕ.

— Каларăм вĕт, тарăн!—терĕ вăл, куç шуррисене тискеррĕн выђатса.—Мĕн сан ĕнсÿ çине улăхса ларас-им манăн?

— А ес тымар çине тăр... Тымарсем нумай, пусма пекех.—Курпун ура кĕлипе тымара хыпашласа тупрĕ те, тÿрех темиçе туратран хыттăн йарса тытса ун çине улăхса тăчĕ. Сулăнкалама пăрахса, çĕнĕ позицире çирĕпленсе çитсен, вăл пĕшкĕнчĕ те, çăварне шыв кĕресрен сыхланса, сылтăм аллипе тымарсем хушшинче пăтратма пуçларĕ. Шыв куракĕсене тата тымарсем çумĕнчи мăксене хыпаланă май унăн алли рак хаччисем çине пырса тăрăнчĕ...

— Сана тата, шуйттана, курман пулĕ,—терĕ Ђубим унтан, çиленнипе ракне шыв хĕрнеле ывăтрĕ.

Йулашкинчен, унăн алли Карачăм аллине шыраса тупрĕ те, ун тăрăх шыв тĕпнеле шуса анса, темле йака та сивĕ йапала патне çитрĕ.

— А-кă вăл...—тесе кулчĕ Ђубим савăннипе.— Пысăк та-çке, мур... Тăрмакла-ха пÿрнÿсене, еп ăна халех сăххисенчен... Тăхта ха, чавсупа ан тĕрт... еп ăна халех... халех... лайăхрах йарса тытма пар кăна... Турат айне шала кĕрсе ларнă, нимрен тытма çук. Пуçĕ патне çитмеле мар. Хырăмĕ çеç алла кĕрет... Вĕлер-ха, ман мăй çинче вăрăм туна пур çунтараť кăна. Епĕ халех... сăххисенчен ăна... Айăккинчен пыр, тĕрт ăна, тĕрт. Пÿрнепе йăкăрласа кăлар ăна!—Курпун пит-çăмартисене карăнтарнă, куçĕсене чарса пăрахнă, пÿрнисемпе „сăххисенчен“ тытма пуçланă пулас, анчах çав самантрах унăн туратсенчен тытакан сулахай алли вĕçерĕнсе кайрĕ те, вăл суланнипе тÿрех шыва чăмрĕ. Çавра хумсем тавранала хăранă пек чупса саралаççĕ, ÿкнĕ вырăнта шывĕ пакăртатса тăраť. Курпун çийеле ишсе тухрĕ те, хăтланкаласа, туратсенчен йарса тытрĕ.

— Путатăн тата, шуйттан, саншăн ответ тытмала пулĕ...—хăйлатрĕ Карачăм.—Тух, çăва патне санпа! Пуллине хамах туртса кăларатăп.

Вĕсем кăшкăрашма пуçларĕç... Хĕвелĕ пур, хĕртет те хĕртет. Мĕлкесем кĕскелнĕçемĕн кĕскелеççĕ, улиткă майраки пек шалала кĕрсе пыраççĕ... Хĕвелпе хĕрнĕ вăрăм курăк хайĕн ăшĕнчен пылак çăра шăршă сарма пуçларĕ. Кĕç кăнтăрла çитет, анчах Карачăмпа Ђубим çапах хăвасем айĕнчех мĕшĕлтетеççĕ. Хăйăлтатакан баспа шăннă, çухрашка тенăр çуллахи кунăн шăплăхне пĕрехмай хускатаççĕ.

— Турт ăна сăххисенчен, турт! Тăхта-ха, еп ăна тĕртсе кăларăп. Ăçта чикетĕн хăвăн пысăк чышкуна? Пÿрнÿпе есĕ, чышкупа мар, сысна пичĕ! Айăккăн чик. Суллахайран чик, суллахайран, сылтăмра лакăм пур. Лекен ак шыври патне каçхи апата. Турт тутинчен.

Вăрăм пушă сасси илтĕнчĕ... Шыв хĕрринчи тайлăк вырăн тăрăх Йеххим кĕтÿç кĕтÿ хăвалаласа анаť. Йулхавлăн утаççĕ выђăхсем; кĕтÿçĕ— хăрах куçлă, пăрнăç туталă ватă старик, пуçне уснă та хăйĕн ури çине пăхса пыраť. Малтан шыв хĕрне сурăхсем пыраççĕ, вĕсем хыççăн лашасем, лашасем хыççăн ĕнесем...

— Турт ăна айалтан,—илтрĕ кĕтÿç Ђубим сассине.—Чик пÿрнÿна. Ес мĕн, хăлхасăрскер, шуйттан мар пуђ-çке? Тфу!

— Кама çак есĕр, тăвансем?—кăшкăрчĕ Йеххим.

— Шампана. Нимĕнле те кăлараймастпăр. Тымар айне кĕрсе ларнă. Айăккинчен пыр. Пыр, пыр!

Йеххим куçне хĕсрĕ те пулăçсем çине пăхса илчĕ, ун хыççăн çăпатине салтрĕ, хутаççине çурăм хыçĕнчен илсе пăрахрĕ, унтан кĕпине хыврĕ. Айалти йĕммине пăрахиччен тăхтама унăн чăтăмĕ çитеймерĕ, çавăнпа вăл, сăхсăхса илчĕ те, тĕк-

сем те ырхан аллисемпе хăлаçланкаласа, айалти йĕммипех шыва кĕрсе кайрĕ... Аллă утăма йахăн вăл шывăн йушкăнла тĕпĕ тăрăх утса пычĕ, унтан ишме пуçларĕ.

— Тăхтăр-ха, ачасем!—тесе кăшкăрчĕ Йеххим.— Тăхтăр! Ăна усăсăр туртма йурамасть, тартатăр. Ĕçе пĕлсе туни кирлĕ!

Йеххим платниксемпе пĕрлешрĕ те, вĕсем виççĕн вара пĕрне пĕри чавсисемпе тата урисемпе тĕрткелесе, пĕр вырăнта тапăртатса, хашкаса йатлаçма тытăнчĕç... Курпун Љубим, шывпа чыхăнчĕ те сывлăш касса кайса ÿсĕрнĕ саспа тулчĕ.

—Ăçта кĕтÿç?—тени илтĕнчĕ шыв хĕрринчен.— Йеххим! кĕтÿç! Ăçта есĕ? Кĕтÿ пахчана кĕрсе кайнă. Хăвала, хăвала пахчаран! Хăвала! Ăçта вăл, ватă разбойник? Арçын сассисем илтĕнеççĕ, унтан хĕрарăм сасси илтĕнет... Хуçа пахчин решутки хысĕнчен, Перçи шалĕнчен çĕлетнĕ халат тăхăннă Андрей Андрейĕвич улпут курăнчĕ. Аллине хаçат тытнă... Вăл шыв хĕрринчи сасăсем илтĕннĕ çĕреле тĕлĕнсе пăхрĕ те, унтан хăвăрттăн купаљнă патнеле утрĕ.

— Мĕн кунта? Кам кăшкăрать?—тесе ыйтрĕ вăл хыттăн, хăва турачĕсем витĕр виçĕ пулăçăн йĕпе пуçĕсене курсан.—Мĕн унта чаваланатăр есĕр?

— Пу... пулă тытатпăр...—тесе мăкăртатрĕ Йеххим, пуçне çĕклемесĕр.

— Еп сана парап ак пулă. Кĕтÿ пахчана кĕнĕ, а есĕ пулă! Хăçан сирĕн, шуйттансен, купаљнă хатĕр пулать? Икĕ кун ĕçлетĕр, ăçта сирĕн ĕçĕ?

— Ха... хатĕр пулать...—хайлатрĕ Карачăм.—Çу вăрăм, ĕлкерĕн-ха çăвăнма, вашескороди... Пфррр... нийепле те çак шампана туртса кăлараймастпăр... Тымар айне кĕрсе ларнă та, шăтăкри пекех—ни унтала, ни кунтала...

— Шампа?—тесе ыйтрĕ улпут, куçĕсем хăйĕн лакпа витĕннĕ пек çутăлма пуçларĕ.—Апла пулсан хăвăртрах туртса кăларăр ăна.

— Аллă пус паратни... тăрăшни усăлă пулсан? Шампи пит пысăк, купец майри пекех... Аллă пус тăрать, вашескороди... ĕçленĕшĕн... Ан лутăрка, Љубим ăна, ан мурикле! Айалтан тĕрт. Тымарне çÿлеле турт, ырă çыннăм... мĕн йатлăччĕ, çак, есĕ? Айалала мар, çÿлеле. Шуйттан! Урусемпе ан пăтрат!

Пилĕк минут иртрĕ, вуннă минут... Улпут тÿсейми пулса çитрĕ.

— Ваçук!—тесе кăшкăрчĕ вăл, хăйĕн кил-çурчĕ йеннеле çаврăнса.—Ваçкă! Ваçука ман пата йарăр-ха.

Часах—Ваçук кучăр чупса çитрĕ. Вăл темĕн чăмлать тата йăвăррăн сывлать.

— Кĕр шыва,—тесе хушрĕ ăна улпучĕ:—вĕсене шампа туртса кăларма пулăш... Шампана туртса кăлараймаççĕ.

Ваçук хăвăрт салтăнчĕ те шыва кĕрсе кайрĕ.

— Епĕ халех...—тесе мăкăртатрĕ вăл.—Ăçта шампи? Епĕ халех... Епĕр ăна... сисиччен... А сан кайсан та йурать, Йеххим! Мĕн сана ватă çынна урăх ĕçе хутшăнма. Хăшĕ унта шампи? Епĕ ăна халех... Акă вăл. Йарăр аларсене.

— Мĕн—аларсене йамали пур унта? Хамăрах пĕлетпĕр: аларсене йарăр! А ес туртса кăлар.

— Ăçтан ăна туртса кăларан апла? Пуçĕнчен кирлĕ.

— Пуçĕ тымар айĕнче. Хамăр та пĕлетпĕр, ухмах!

— Ну, ес пит ан хăрлат, унсăрăн пырса та тивĕ... Сволăч!

— Господин улпут умĕнчех çавăн пек сăмахсем...—пуплешрĕ Йеххим.— Кăлараймастăр есĕр, тăвансем! Пит те ловкă кĕрсе ларнă вăл унта.

— Тăхтăр кăна, еп халех... терĕ улпут, унтан хăвăрт салтăнма пуçларĕ.—Тăватă ухмах тупăннă есĕр, шампана çапах кăлараймастăр.—Салтăнсан, Андрей Андрейĕвич тарланă ÿчĕ сивĕниччен тăхтарĕ те, шыва кĕрсе кайрĕ.

— Тымарне тытас пулать.—Шутларĕ Љубим йулашкинчен.—Карачăм, чуп, пуртă патне! Парăр пуртă!

— Таçта, хăвăрăн пÿрнÿсене ан касса татăр!— терĕ улпут, шыв айĕнче тымара касакан пуртă сассине илтсен.—Йеххим, тасал кунтан! Тăхтăр, шампине хам туртса кăларам... Есĕр пултараймастăр...

Тымара касса татнăпа пĕрех. Ăна кăштах хуçрĕç те, Андрей Андрейĕвич вара питех те савăнăçлăн хăйĕн пÿрнисене шампа сăххисем ăшне кĕртсе йачĕ.

— Кăларатăп, тăванăмсем! Ан кĕпĕрленĕр... Тăхтăр... кăларатăп.

Малтан шампан пысăк пуçĕ курăнчĕ; ун хысçăн аршăн вăрăмĕш пĕвĕ тухрĕ. Шампа йăвăррăн хÿрине выљтать вăл вĕçерĕнсе тарасшăн.

— Тапаланах... Тараймăн, тăванăм. Лекрĕн? Аха! Кашнин пит-куçĕ кулать. Минутлăха кăмăл шăранать. Никам та пĕр сăмах чĕнмест.

— Чаплă шампа,—терĕ Йеххим, хул хушшине хыçкаласа.— Вунă кĕренке пулĕ...

— Нда-а... тесе килĕшрĕ улпут.—Пĕверĕ çапах карăнать хăйĕн. Ха, йепле тĕртет ăна шалтан. А...ах!

Шампа сасартăк хÿрипе çапса илчĕ те пулăçсем шыв хытă шампăртатнине илтсе йулчĕç... Пурте аллисене сарса пăрахрĕç, анчах кайа пулчĕ: шампа самантрах умран çухалчĕ.

**И. Н. Иртышĕв куçарнă.**

## Туçи Мăрат колхозĕнче

— Ăçта кайан, сысна тус?
— Йĕтем çине кайатăп.
— Мĕн тума?
— Унта бригадирсем мана ваљљи ыраш пучахне купаламасăрах хăварнă терĕç те, çавăнта кайса пăхас терĕм.
— Хуралçă курсан туйапа çапать вĕт!
— Çук çапмасть. Епĕ правлени каланине илтрĕм. Унта хурал парсан ĕçкунĕ нумай расхутланать тенине илтнĕччĕ. Çавăнпа та хуралĕ те çук пулĕ, тетĕп.

**Колхозник.**

# Кулас килет

## Ҫӗмӗрлере

— Сирӗн комбинат кӑҫал хӑйӗн ҫӗнӗ клубне хӗллеччен туса пӗтерӗ-ши?

— Хӗллеччен тетӗн? Хӗлӗ февраљ уйӑхӗнче пуҫлансан, туса пӗтерессех ӗнтӗ.

## Кайала илмесен

— Мана каланӑ сӑмахне Варвари кайала илмесен, ӑна качча илес шухӑша пӑрахатӑп епӗ.

—- Вӑл сана мӗнле сӑмах каланӑ апла?

— Вӑл-и? Мана вӑл: сана йуратмастӑп, кахал ес, терӗ.

Ю. Дмитрийӗвпа К. Теодорович ӳкерчӗкӗ („Прессклише“).




Берлин Йевропӑ циркӗнче камитле выљани.

## Кӗтсе выртнӑ

— Намӑс! Хӗллене хатӗрленменшӗн пире йатласа хаҫатра статйа тухнӑ. Вуланӑ-и? Хӗллене хатӗр маршӑн епӗ кӑна мар, есӗ те айӑплӑ!

— Апла пулӗ те, анчах сана епӗ ҫу каҫипех ун ҫинчен каланӑ. Есӗ: ӗлкерӗпӗрха, текелесе паха вӑхӑта ирттерсе йатӑн.

— Ара, ун чухне хӗллене хатӗрленесси ҫинчен циркуљар килменчӗ-ҫке!

## Курман йапала

Колхозсен ревизи комиҫҫисем чылайӗшӗ ӗҫлемесӗр ирттерессӗ.

— Кайар, Иаван, мӗн пӑхса тӑран ара? Ҫынсем ӗҫлесе ларнине курман-им?

— Кусене-и? Курман ҫав. Кашни кунах килкелесе кайатӑп та, анчах ревизи комиҫҫи председателӗ Никитин ӗҫлесе ларнине пӗрремӗш хут куратӑп.

## Пушӑ мар

Урампа ӳсӗр ҫын пыраҭ. Пӗр аллинче ҫур литр, тепӗр аллинче чӗрӗк литр. Ӑна хирӗҫ избач пыраҭ.

— Ма пӗр май ӗҫен ҫак ес? Ӗҫни усӑсӑр, шутсӑр сийенлӗ. Ӗҫсе ҫӳрес вырӑнне, аллуна кӗнеке тытасчӗ сан?

— Кӗнеке тытма пулаҭ, анчах аллӑм пушӑ мар-ҫке ман.

## Пахчаçимĕçсойузра ĕçлекенсен вечĕрĕнче

— Кĕске йумах йарса парам: пĕр пичкен хĕрĕх кăшăл,—çав мĕн пулаť?

— Пахчаçимĕçсойузĕ кăçал хĕљ ваљљи çителĕклĕ хатĕрлесе хума маннă, купăста йатлă çимĕç.

## Унăн та пушă мар

Ťйакăн пуп патне чертвĕрт ерех йатса менелник тума кайнă. Хапхаран кĕрсенех шăнса пăр пулнă кўлленчĕк урлă утса каçнă чухне, унăн ури шуçса кайнă та, четвĕрчĕпех çĕре персе аннă.

— Ех, сахал ĕненекен,— тенĕ ăна пупĕ.—Хамăр вĕрентнĕ тăрăх, Иисус тинĕс урлă утса каçнă, есĕ кўлленчĕк шыв урлă каçаймарăн.

— Каларĕ. Ара унăн аллисем иккĕшĕ те пушă пулнă. Аллине четвĕрт тытнă пулсан, каçайман пулĕччĕ,—тенĕ.

## Йалтан хулана хуларан...

Полљшă—çуклăх çĕршывĕ. 1,6 мĕлйун çын çулсеренех ĕç шыраса йалтан хулана тараççĕ. („Пресcклише").



**Полљшă хресченĕ:** Епĕ чухăна тухнă йалтан килетĕп... Хулара лайăх тенине илтрĕм.

**Полљшă рабочийĕ:** Епĕ тата выçă ларакан хуларан килетĕп. Йалта лайăх тенине илтрĕм...

## Салакайăк сикнине курсан

— Пĕлетĕн-и, салакайăксем ма тăрстин-тăрстин сикеççĕ?

— Пĕлместĕп.

— Хĕл час пулас çук-ха: ак ку çуртăн кантăкĕсене те йусаман-ха, тесе сикеççĕ.

## Йутçĕршыв çынни

— Совет Сойузĕнче чылай цирксене кĕркелесе курларăм. Нихăшĕн программинче те снайперсене кăтартасси çук. Ма вăл?

— Снайперсемпе тĕлĕнтерме çук-çке. Кунта курса ларакан çынсем пурте Ворошилăвла тĕл перекенсем!

# ТУЛТИ СЦЕНКĂ

Сиккассинчи (Канаш р-нĕ) колхозăн пĕрремĕш бригадинче пулса иртет ку сценкă.

**Павăл:**—Ак тамаша, ман урапа çумĕнчи урхалăха кам илнĕ?

**Михаља:**—Урхалăха йавса хума та пулаť-ха ăна. Пăх-ха, манне урапа çумĕнчи туртана такам кăларса кайнă.

**Антун:**—Так, пĕкĕ анчах кирлĕ. Ăçта-ши пĕкĕ?

**Коњух:**—Пĕкĕ çук. Ĕнер бригадир пĕкĕ вырăнне урапа тукунĕпе кўлсе кайрĕ.

**Антун:**—Нукка, пар-ха еппин, кўлсе пăхам.

**Коњух:**—Ав, навус купи айĕнче выртаť.

**Антун:** (навус купи айĕнчен урапа тукунне кăларса кўлсе пăхаť.)—Йураť, хăнана каймастăпха. Вăрмантан вутă çех тийесе килетĕп (*тухса кайаť*).

**Павăл:**—Ťфу! Ĕç пулаť-и ку пирĕн. Урхалăх вырăнне—йĕвен аври, шертешник вырăнне—плуг урапин шăлĕ. Тилхепи çук-ха тата. Итем инçе мар-ха, çавăтса тухса, çавăтса та кĕрĕп (*тухса кайаť*).

**Михаља:**—Павăл! Ан кай-ха, манăн тевĕш çук. Урхалăха салтса парахса хăвар-ха?

**Коњух:**—Ĕнер бригадир çав урапапа тевĕшсĕрех Шелттеме хăнана кайса килчĕ. Бригадире йуранине—сана йурамаcť-и?

**Михаља:**—Йураť еппин! Ей! Айда! Ťфу! Ех, мур. Тĕнĕл вĕçĕнчи пăта çук пирки кустăрма тухса ўкрĕ.

**Коњух:**—Акă кунта çĕмрĕк урапа çумĕнче пур, килсе ил çавна.

**Михаља:**—(*пырса илет те, кустăрмине тăхăнтарса хураť*). Ей! Пошли!

Кăшт вăхăт иртсен бригадир пырса кĕрет.

**Бригадир** (*коњух йеннеле*):—хăвăр патăрта ĕçнĕ чух каларăм вĕт сана, ĕçтермен çынсене лаша ан пар, тесе?

**Коњух:**—Малала памастăп.

**Бригадир:**—Лаша ыйтакансене епĕ çырса парăп. Анчах есĕ вĕсене, çук тесе йар, ан пар.

**Коњух:**—Йурĕ.

**Бригадир** (*шăппăн*):—сан арăму виçĕмкун кăрчама йўçĕтетчĕ. Кайса ĕçер-ха çавна?

**Коњух** (*шăппăн*):—Епĕ çитес пасара кăмрăк сутма кайас тетĕп.

**Бригадир:**—Кайса ĕçер-ха. Вара кайатăн.

**Коњух:**—Айда!

(Хапха хупăнаť).

**Илле Пайташ.**

# ЙĔПЛĔ ÇĂМАХ

## Тĕл перекен

„Алино“ колхоз (Ишлей районĕ) çумĕнчи кружок йулашки вăхăтра питех те начар ĕçлеме пуçларĕ. Кружок руководителĕ С. Смирнов „патронсем çук“ тесе ларать. Хăй йаланах пĕчĕк калибĕрлă винтовкăран кирлĕ-кирлĕ мар йапаласене персе çÿрет. Час-часах кăвакарчăнсене тата ытти кайăксене персе тытса çÿрет.

**Смирнов:**—Çынсем кашни кунах мишен текен хăма татăкĕсене усăсăр переççĕ. Хăйсене хăйсем, хăма варне 4—5 пуля лектерсен, Ворошиловла стрелок теççĕ. Вĕсене мĕн стрелок темели пур! А вот епĕ чăн-чăн стрелоках ĕнтĕ, кашни кун виç-тăвата кăвакарчăн тытса йашка пĕçерсе çийетĕп...

А. Садыков.

## Шурă çине хурапа

Хут листин тăваттăмĕш пайĕ. Ун çине штамп пуснă: „Народный Комиссариат Коммунального хозяйства Чувашской АССР, № 85“, малала текст:

„Наркомхозу ЧАССР.

Наркомхоз Чувашской АССР доводит до сведения, что Вам необходимо получить дрова за II половину 1938 года от Чувашлеспрома 60 (шестьдесят) куб. м.“.

Ку хутăн айĕнче коммуналлă хуçалăх халăх комиссарĕн алпусăмĕ çук. Анчах инженер Ахламов йулташ чăрлаттарнă ку хут çине. Апла тунипе вăл хутсене вуласа пăхмасăрах алпусса йани çинчен çÿрекен сăмаха тепĕр хут çирĕплетсе панă.

Йурать, Ахламов йулташ прокурор мар, ахалĕн ун пек асăрхамасăр хăтланнă чух хăйне айăплама ал пусса парасси те пулма пултарать.

## Ăс-тăн çитменрен

Канашри автовокзалра хăйĕн содержанийĕпе хăратса пăрахакан пĕлтерÿ çакăнса тăрать. Унта çапла çырнă: „до отправления автобуса озаботиться сдачей такового в багажную кассу для отправки грузовой машиной“.

Ку тăрлавсăр пĕлтерÿпе мĕн каланине ăнланас тесе, ăна тĕрлĕ майлă вуласа пăхрăмăр. Нийепле те ăнланмала мар. Автобуса грузовикпа турттарнине нихăçан та курман епĕр. Пирĕн багаж çукчĕ те, çапах администрацинчен хăшне-пĕрне çак ребуса ăнлантарса пама ыйтрăмăр епĕр.

— Вăл нимĕн те мар, çак плаката çĕклĕр те, пурне те куратăр,—тесе ăнлантарчĕç пире.

Плаката хăйпăтса çĕклерĕмĕр те, пĕлтерĕвĕн пуçламăшне тупрăмăр. Вăл çапла пуçланать: „пассажиры, имеющие багаж свыше 5 килограммов, должны...“—малала çÿлте асăннă сăмахсем кайаççĕ.

— Çтена çине плакат çакасси йăвăр ĕç мар ĕнтĕ,—çапах та ăна тума та ăс-тăн кирлĕ.

Анчах ăна ăçтан илмеле?

## Хĕл умĕн

Хĕл килсе пынă. Çынсем те, вĕсен кайăксем те, хурт-кăпшанкăсем те сивĕ хăнана йышăнса илме хĕрсе хатĕрленнĕ. Çынсем вут-шанкă, хĕл хырăмне валли çимелисемпе ĕçмелисем хатĕрленĕ, тискер кайăксем хĕл каçма ăшă шăтăк шыранă, вĕсен кайăксем ăшăрах вырăн шыраса кăнтăрала вĕçнĕ. Хĕл çинчен пурте шухăшланă. Пирĕн Шупашкар хулин Коммуналлă хуçалăх пайĕ çеç ун çинчен тивĕçлĕ пек шухăшлама ăс çитереймен. Çурт-йĕрсен ремонт планĕ тулман, водопроводпа канализаци планĕ те тулман, асфальт сарас ĕç пĕтмен т. ыт. те.

Крылов поет калашле: „Çу иртни те сисĕнмен. Пăхнă калла çаврăнса, кĕр те иртнĕ, хĕл çитнĕ“.

## Кречинскисем

Сухово-Кобылин драматург çырнă „Кречинский туйĕ“ пйессăн тĕп геройĕ Кречинский: „укçа-тенкĕ кашни килĕрех пур, анчах çаклатма пĕлес пулать ăна“ тет.

Канашри вăрăсем те Кречинский майлах калаççĕ: укçа-тенкĕ кашни предприйатипе учреждениреx пур, анчах çаклатма чухламала, теççĕ.

Йулашки 2—3 çул хушшинче унта 500 пин тенке йахăн растрата пулнă. Кăçал Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕнче кăна 7 уйăх хушшинче 11 пин тенкĕ растрата тунă. Суд исполнителĕн Торг уйрăмне кăна 22 пин çурă тенкĕ шыраса памала. Анчах исполнитĕл листисем суд исполнителĕ сĕтелĕн йешчĕкĕнче ним тапранмасăр выртаççĕ.

Канашри растратчиксене çакăн пек приказ памала: растрата тăвас умĕн вĕсем унти пуçлăхсене, хăйсем растрата тума шухăш тытни çинчен, зайавлени çырса пĕлтерччĕр. Ахалĕн пуçлăхсем растратта чарса лартма пĕлмеççĕ.

## Ваттисем калани



Йур çусан кăмпана каймаççĕ.

# ПĔЛТЕРӲПЕ

Темле-тепле манăн Йӳçкасси çумĕнчи мăн çулпа иртсе каймала пулчĕ. Пысăк та матур кĕсрене Йӳçкасси уй хапхи умне çитсенех чаратăп. Уй-хапхине уçса кĕсрене йалала кĕртетĕп кăна, ман патăма икĕ çын чупса пычĕç. Пычĕç те мана çаватрĕç те, нимĕн чĕнмесĕрех йалала илсе кайрĕç. Епĕ нимне пĕлменскер, тĕлĕннипе ыйтрăм:

— Хаклă йулташсем, ăçта илсе кайатăр мана?

— Колхоз председателĕ патне, йалта лаша чирĕ „менингит“ пур, есĕ çавна пĕлсех йалала шала кĕретĕн. Председателĕ штрафлаĭ сана!

Епĕ хăрасах кайрăм та, ыйтатăп:

— Мĕн таран штрафлама пултараĭ?—тетĕп.

— 100 йе ытларах та,—теççĕ-ха лешсем.

— Тархасшăн ан илсе кайăр,—тархаслатăп епĕ.

— Пĕр литр ĕçтеретĕн пулсан, илсе каймастпăр...

— Литр мар, çур литр ĕçтерме пултаратăп, укçам çук, тархасшăн итлĕр!

Чылай тавлашса тăнă хыççăн, çур литрла килĕшрĕç. Председателĕ ан куртăр тесе, ерехе ĕçтерсе, хăвăртрах урапа çине ларса кĕсрене хăваларăм. Уй хапхинчен тухса хам çула малала тăсрăм. Мансах кайнă тата калама: уй-хапхине çитсен хапха йупи çине пăхрăм та, унта мĕн çырнине хăвăртрах вуласа илтĕм: „об‘явление—гарантин. Йӳçкасси йалĕнче лаша чирĕ „Менингит“ пур. Итлеменнисене 100 тенкĕ штраф“. Çапла çырнă унта. (Пĕр сăмахне те хушса, катса çырмарăм). Мĕн çул çинче лашалă çынна курнисене пурне те хам çинчен, Йӳçкассинче „менингит“ пурри çинчен каласа кăтартрăм вăл кун.

Шупашкарта икĕ кун пурăнса киле килме тухрăм. Манăн каллех çав Йӳçкасси çумĕпех иртсе каймала пулчĕ. Йалтан айаккарах тытрăм лашана. Йупа çине пăхатăп—„Менингит“, „об‘явление—гарантин“ тесе çырни çук. Лапах тата лавкана пынă çын пулмала уй хапхинчен лашипе тухаĭ.

— Йулташ,—тетĕп епĕ,—халĕ чир çуки йалта?

— Çук, пулман та вăл,—ответлет вăл.

Пулман та тенĕрен епĕ тĕлĕннипе, хăранипе хутăш пурне те ыйтса пĕлтĕм. Ĕçĕ çапла пулнă иккен. Колхозăн икĕ коңухĕ—Ивановпа Николайĕвсем колхозăн самăй аван лашине шыва кĕртнĕ те—лаши шыва путнă имĕш. Лашана иртсе кайакан çынсемпе аран-аран туртса кăларнă пулнă. Çакăн çинчен колхоз правленине пĕлтернĕ. Колхоз правленийĕ „чир“ тесе ветврача пĕлтернĕ. Ветврач колхоза килсе шыва путнă лашана „менингитпа“ чирленĕ тесе йышăннă. Йышăннă та „об‘явлени—гарантин, „менингит“ тесе çырса йалăн пур кĕтесне те çырса çапнă. Çапла вара темиçе çынран вĕсем манран ĕçнĕ пек литр çурă, литр, çур литр ĕçсе йулнă. Темлерен темле, ĕç пурне те паллă пулнă. Халĕ ĕçе прокурор аллине панă. Ман хамăн та çав „об‘явление“ тесе çырни вырăнне „хисеплĕ прокурор“, „Йӳçкасси йалĕнче лаша чирĕ менингит пур“ тени вырăнне—„Йӳçкасси йалĕнче лашана вĕлерекенсем, çынсене улталакансем пур“ тесе, „итлеменнисене 100 тенкĕ штраф“ тесе çырни вырăнне—„çав çынсене çирĕп ответ тыттармала“ тесе çырас килсе кайрĕ.

**Алексейĕв—Усман.**

---

# Вулакансен жалăбисем

## *Капкăн тус!*

*Хосакассинче (Трак р.) ĕнтĕ растратă хыççăн 6 уйăх ытла кооператив лавки мăн çăрапа питĕрĕнсе ларат. „Уççи çухалнă“ пулас. Кам та пулин уççине тупса сирĕн пата пырса паман-и? Пырса панă пулсан, малалахи „Капкăнсене“ ăсатнă чухне парса йарсамчĕ.*

*ВАС. ИВАНШКОВ.*

## *Капкăнăм!*

*Вырăссен çакăн пек ваттисен сăмахĕ пур: „Улитă ларса килет, хăçан та пулсан килсе çитетех“. Епĕ çав килсе çитеймен Улитă мĕнне халчен пĕлменччĕ. Халĕ пĕлтĕм ĕнтĕ. Вăл —Шупашкарти ĕççыннисене турттарса çӳремели такçи пулаĭ. Хула совечĕ çыннисем шантарнă тăрăх, вăл такçи иртнĕ çуркуннех Шупашкара килмелеччĕ, анчах пайанччен те килеймен-ха.*

*ИВАНОВ.*

## *Капкăн йулташ!*

*Йетĕрнери МТС-ран пирĕн учреждени бензин нихăçан та илмен. Çав нихăçан та илсе курман бензиншăн пирĕн учрежденийе МТС бухгалтĕрĕсем 2 тенкĕ те 10 пус укçа тӳлеттерессĕн. Вĕсем йанă 556-мĕш номĕрлĕ отношени тăрăх, пирĕн вăл укçана октăбĕр 25-мĕшĕччен тӳлемеле. Тӳлемесен... „в случае невыполнения в срок, дело будет направлено в Народный суд для принудительного взыскания“ тенĕ отношенинче. Судпа хăратаççĕ.*

*Епĕр хăрасшăн мар, мĕншĕн тесен хучĕ çине алпуснă директăрпа бухгалтĕрăн волокитă нумай палăраĭ вăл хута вуласан.*

*ПОПОВ.*

Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ. Зам. отв. редакт. В. ЯКОВЛЕВ

Сдано в производство 27/XI-1938 г. Подписано к печати 30/XII-1938 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 596. Заказ № 87

Формат бум. 58×83 1/8. Об'ем 2,5 п. л. Тираж 4500 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАСС

Журнал хакĕ — 40 пус.



— Сана, çутĕç комиссариачĕ работникне, çак хаçата тыттарам. Ан мак — вăл саншăн асăнмалăх панă йапала вырăнче пултăр.
— Асăнмалăх пулсан ма хаçатăн, çĕнĕ номĕрне мар, киввине паратăн-ха?
— Ара, хаçатăн çак номĕрĕнче РСФСР Çутĕç халăх комиссарĕ хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене 14 çултан пуçласа 50 çула çитиччен пурне те 1939 çулти майăн 1-мĕшчен хут вĕрентсе кăларма хушни çинчен пичетлесе кăларнă.